# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

## Вăл вĕрентекен пулмах çуралнă

**Раççей Президенчĕн 2018 çулхи çу уйăхĕнчи «2024 çулччен тапхăрта Раççей Федерацине аталантармалли наци тĕллевĕсем тата стратегиллĕ задачăсем çинчен» Указĕнче палăртнă наци тĕллевĕсене тата вĕсенчен тухса тăракан кăтартусене пурнăçлассине тивĕçтерме йышăннă.**

**Регионри «Вĕренӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх политикин приоритечĕ тата унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри инновациллĕ вĕренӳ условийĕсене йĕркелени тата аталантарни пулса тăрать.**

**Çак кунсенче «Пероран пуçласа софта çити» республикăри педагогсен форумĕ иртнĕ. Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев та хутшăннă.**

**«Эсир тăвакан ĕçрен ыран мĕнле пуласси пĕтĕмпех килет. Унăн пахалăхĕ, пирĕн çитĕнӳсем. Мĕншĕн тесен пĕлӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура пайне тимлĕх уйăрни – ученăйсем каланă тăрăх, çынна инвестици хывни пулать. Эсир пуласлăх никĕсне хыватăр, пирĕн ачасене пĕлӳ паратăр. Чăваш Республикин правительстви вĕренӳ шайне аталантарасси çине чи пысăк тимлĕх уйăрĕ. Бюджета малашне улшăнусем кĕртес шайра эпир шкулчченхи, вăтам, професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисене тĕпрен çĕнетсе пыма пулăшу уйăрма пăхса хăваратпăр»,–тенĕ регион Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев форумри куравпа паллашнă хыççăн.**

Пирĕн районта «Паянхи шкул», «Пуласлăх вĕрентекенĕ», «Кашни ачан çитĕнĕвĕ», «Кашнин валли çĕнĕ мелсем», «Цифрăллă вĕренӳ лару-тăрăвĕ», «Ачаллă çемьесене пулăшасси», «Социаллă активлăх», «Çамрăк профессионалсем» регионри проектсем пурнăçа кĕреççĕ.

Тăвайри вăтам шкул коллективĕ 2015 çулта Раççейри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан ялти чи лайăх 200 шкул, 2017 çулта виççĕр вĕренӳ организацийĕ йышне кĕнĕ, Грант çĕнсе илнĕ. ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин «Инновациллĕ шкул» вĕренӳпе методика комплексĕн пилотлă лапамĕ пулса тăрать вăл. 2019 çулта асăннă йыш 200 пин тенкĕлĕх Гранта тивĕçнĕ. Çавна май «Ӳсĕмсен çулĕ» гуманитарипе цифра профилĕсен центрĕ – Тăвайри вăтам шкулта, пурĕ республикăри 40 вĕренӳ çуртĕнче уçăлнă.

Çĕнĕлĕхпе паллашма нумаях пулмасть асăннă шкула çитрĕмĕр.

–«Ӳсĕмсен çулĕ» гуманитарипе цифра профилĕсен центрне пĕрремĕш хутра, виçĕ класра вырăн патăмăр пĕлтĕр çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн, пӳлĕмсене юсаса илемлетрĕмĕр. «Лобзик», «Робототехника» кружокĕсен, «Уйрăм проект» курсăн, информатикăн ĕçлĕ программисене, занятисен расписанине хатĕрлерĕмĕр. Н.Михайлова, Н.Староселец, С.Неофитова, Е.Моряков, М.Алексеев вĕрентекенсене сĕнтĕмĕр унти ĕçсене йĕркелесе пыма. Центрта уроксем хыççăн 5–11 классенче вĕренекенсем пĕлĕвне анлăлатаççĕ хальлĕхе. Ăна çĕнĕ оборудованисемпе тивĕçтерме май килчĕ. Ачасем вĕренӳри çĕнĕлĕхе хаваспах йышăнчĕç,–терĕ шкул директорĕ В.Кириллова. Тăхтав пĕтнине пĕлтерсе шăнкăрав янăраса кайрĕ кĕçех, коридорта шăплăх хуçаланма пуçларĕ.



♦ Е. Моряков вĕрентекен ачасемпе

Евгений Николаевич Моряковăн технологи урокĕ халь пиллĕкĕмĕш «а» класра иккен. Центрпа юнашарах вырнаçнă ĕç пӳлĕмĕ. Эпир пырса кĕнĕ чухне сĕтел хушшинче ларакан вĕрентекен арçын ачасене темăпа паллаштаратчĕ. «Сывлăх сунатпăр»,–терĕç вĕренекенсем ура çине тăрса. «Кунта турпас шăршине юратаççĕ»,–тесе çырнă вывеска куç тĕлне лекрĕ. «Эппин кунта ĕçчен алăллисем çитĕнеççĕ»,–вĕçрĕ пуçра шухăш.

–Паян мĕн тăватпăр, Евгений Николаевич?–кăсăкланчĕ хăюллăраххи, Антон Симушкин.

–Кĕçех çуркунне çитет, вĕçен кайăксем вĕçсе килеççĕ, вĕсем валли сырăшсем ăсталама хăнăхăпăр,–пулчĕ хурав.

–Урра-а!–хĕпĕртенине пытараймарĕ арçын ачасен ушкăнĕ. Умĕсене ĕç саппунĕсем çакнăскерсем сĕтел хушшинче тĕрмешме пуçларĕç кĕçех.

Çак самантра çитĕнекен ăрăва ĕçе юратма хăнăхтаракан Евгений Николаевич Моряков пирки сăмах пуçланчĕ пирĕн.

... Тăвай ялĕнчи служащисен çемйинче, 1976 çулхи раштав уйăхĕн вунсаккăрмĕшĕнче тепĕр ывăл çута тĕнчене килнĕ, Женя ят панă ăна ашшĕпе амăшĕ.

Тушкилти шкулта лайăх паллăсемпе вĕреннĕ ача, юлташĕсемпе пĕрле йывăçран тĕрлĕ япаласем ăсталама хăнăхса пынă. Тĕрлĕ конкурссенче хăйĕн харсăрлăхне кăтартнă, малти вырăнсене йышăннă.

–Пирĕн йăхри арçынсем ку енĕпе питĕ ăста пулни пирки атте каласа кăтартни халĕ те асрах,–сăмах çăмхине сӳтет ылтăн алăллă вĕрентекен.

1991 çулта Тушкилти вăтам шкулта тăхăр класс пĕтернĕ вăл, Шупашкарти педагогика училищине çул тытнă, çутă малашлăхне вĕрентӳпе çыхăнтарма шут тытнă.

«Ĕçпе черчени вĕрентекенĕ» специальноçпа 1994 çулта тăван тăрăха таврăннă. 1995 çулхи кăрлачпа çурла уйăхĕсенче Тăвайри ачасемпе çамрăксен центрĕнче кружок ертсе пынă.

Тĕмерти вăтам шкулта ӳнер, технологи, черчени предмечĕсене вĕрентме сĕннĕ çамрăк специалиста 1995 çулта. Ĕçленĕ хушăрах Мускаври патшалăх педагогика университечĕн Шупашкарти филиалĕнче аслă пĕлӳ илнĕ, социаллă педагог-психолог пулса тăнă. Мучарти шкулта та хăйĕн тивĕçĕсене аван пурнăçланă Е.Моряков.

2005 çулта вăл Тăвайри вăтам шкула вĕрентме куçнă. Паянхи кунччен çамрăксене ĕçе хисеплеме вĕрентет, кружок ертсе пырать.

Унăн вĕренекенĕсем технологипе республикăри олимпиадăра, «Шырав» наукăпа практика конференцийĕнче ырă тĕслĕх кăтартаççĕ çуллен. Хăй те чылай çитĕнӳ тунă вăл. «Çулталăк вĕрентекенĕ» конкурсра çĕнтерсе район чысне республикăра хӳтĕленĕ. Волейболла выляма юратать, наци чупăвне хутшăнать, тăтăшах малти вырăнсене тухать. «Чĕреме ачасене паратăп» республикăри конкурсран пĕр çулхине çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăннине халĕ те манмасть. Йĕлтĕр çине тăма та манмасть учитель. Пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт комплексĕн ылтăн знакне тивĕçлĕ пулнă 2018 çулта маттурскер. Вăл ырă тĕслĕх кăтартнă мероприятисене пурне те асăнса пĕтерейменĕпĕр.

ЧР Пуçлăхĕн грантне те тивĕçлĕ пулнă пирĕн харсăр ентешĕмĕр, 2016 çулта пултаруллă учителе РФ вĕренӳ тата наука министерствин Хисеп грамотипе чысланă. 2019 çулта вара республикăри вĕрентекенсен конференцийĕнче Тăвайри пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти Евгений Николаевич Моряков педагога «ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» хисеплĕ ят парса хавхалантарнă.

Вĕçĕм çĕнĕлĕх шырать вăл. Ачасемпе вĕрентекен хушшинчи çыхăну çирĕпленсех пырать. Çамрăксем вĕренсе тухса кайсан та тăван шкула килсех çӳреççĕ, Евгений Николаевичпа тĕл пулмасăр каймаççĕ.

Çемьеленнĕ вăл, мăшăрĕ, Марина Владимировна, кӳршĕри Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Кавал ялĕнчи нумай ачаллă çемьерен. Аслă пĕлӳллĕ, заочно майпа Шупашкарти кооператив институтĕнче вĕренсе дипломлă пулнă. Халĕ Тăвайри тĕп больницăн экономистĕнче тăрăшать.

Моряковсем аслă ывăлне Аркадий ят панă. Вăл районти ăста алăллă çамрăксен конкурсне хутшăнма кăмăллать. «Атте пекех пăта çапма, йывăç татса касма юрататăп, ăна çуртри ĕçсене тума пулăшатăп»,–тет тăххăрмĕш класра вĕренекен каччă. Тимофей виççĕмĕш класри пĕлӳ тĕнчипе хăюллăн утать. Туслă мăшăрăн чи кĕçĕнни – хĕр пĕрчи. Кĕтерук-чиперук, теççĕ ăна. Тăвайри «Радуга» шкулчченхи учреждение çӳрет иккен вăл. Асламăшĕ, Римма Григорьевна, питĕ юрататать хĕрачана. Пушă вăхăтра Тушкилтен тăтăшах килет пĕчĕкскере курма. Ĕмĕрне сентре умĕнче ирттернĕ вăл, тивĕçлĕ канăва тухиччен «Тăвайри кооператив» потребобществăра сутуилӳ туса ял çыннисен мухтавне, тĕрлĕ наградăсене тивĕçлĕ пулнă. Халĕ те кил хуçалăхри ĕççене вăйĕ çитнĕ таран туса пырать. Унăн мăшăрне Николай Варфоломеевича пĕлмен çын çук та пулĕ районта. «Шимкусский» ЯХПК ертӳçин йывăр лавне ăнăçлă туртса малалла ăнтăлнă арçын.

Вĕсенчен ырă тĕслĕх илсе ӳснĕ кĕçĕн ывăлне, Евгений Николаевича, лайăх юртакан лашапа танлаштарас килет. Хăйсен йăвинчи кашни хăмана вăл тытса пăхнă тесен те йăнăш мар. Иккĕмĕш хутне те хăпартнă, ачисем валли вĕренмелли, çывăрмалли пӳлĕмсем ăсталанă. Тумалли, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсем татах та пур иккен. Хăйне хавхаланса ĕçлеме май паракан мастерскойра вăхăт иртнине те сисмест Е.Моряков.

Юратнă пиччĕшĕ, Андрей Николаевич та, маттур, Моряков хресчен-фермер хуçалăхĕн ертӳçинче пысăк хавхаланупа вăй хурать.

Урок пĕтнине систерсе, ак, шăнкăрав сасă пачĕ. Вĕренекенсем класран тухрĕç.

–Шкулти «Ӳсĕмсен çулĕ» центрпа паллаштарасшăн сире,–сĕнчĕ педагогика ĕçĕнче ырă тĕслĕх кăтартакан Е.Моряков. Хаваспах килĕшрĕм.

Пĕр пӳлĕмĕнчи сĕтелсем хушшинче тăваттămĕш класра вĕренекенсем ларатчĕç, хăнăхнă йĕркепе вырнаçтарманччĕ партăсене. З.Иванова учительница урок ирттернĕччĕ пĕчĕккисемпе. «Çĕнĕ çĕрте вĕренме аван-и?»–кăсăклантăм ачасенчен. «Аха»,–харăс хуравларĕç вĕсем.

Иккĕмĕшĕнче темĕнле кăсăклă оборудованисем пурччĕ.

–Çак интереслĕ 3D куçлăха тăхăнăр-ха, тархасшăн, тинĕс айĕнче пулса куратăр,–экскурсие малалла тăсрĕ Евгений Николаевич.

–Ай, еплерех илемлĕ кунта! Пуллисем мĕн чухлĕ тата! Пĕри çывăхранах иртсе кайрĕ, эх, тытаймарăм,–хам сисмесĕрех калаçма тытăнтăм ятарлă куçлăх тăхăннă хыççăн. Самантран пы-ысăк пулă сĕртĕнсе иртни курăнчĕ, çурăм тăрăх сивĕ хум чупрĕ çав вăхăтра.

Тепĕр оборудованипе «Лобзик» кружока çӳрекенсем тĕрлĕ сувенирсем хатĕрлеççĕ. «Чăваш Ен», «ЯСОШ», «От пера до софта» тесе çырнисене тытсах куртăм. Виççĕмĕш класĕнче те сĕтелсемпе пукансем ларатчĕç, паянхи кунпа килĕшӳллĕ йĕрке хуçаланатчĕ унта.

–Тепĕр хут професси суйлама сĕнсен, вĕрентекен çулĕпех кайăттăр-и?–кăсăклантăм чылайранпа технологи вĕрентекен Е.Моряковран.

–Юратнă республикăпа тăван район ырăлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлеме хатĕр, ăслă-тăнлă та тĕрлĕ енлĕ аталаннă, конкуренци пултаруллăхĕллĕ тата яваплă çынна пăхса çитĕнтересси – пирĕн пĕрлехи тĕллевĕмĕр халь.Учитель пурнăçра палăрмалла пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Унăн пĕлĕвĕпе анлă тавракурăмĕ ачасен малашлăхĕ çине витĕм кӳрет. Педагогсен компентентлă, ăслă, пултаруллă, культурăллă, ырă кăмăллă, сăпайлă, тактикăллă, хăй тĕллĕн аталанакан, пуçаруллă пулмалла, вĕренӳ пахалăхне пирĕн тăтăшах лайăхлатмалла. Вĕрентекен профессине суйласа илнĕшĕн вара чунтан савăнатăп паян. Малашне те çамрăксемпе пĕрлех пулма тăрăшăп»,–тесе сывпуллашрĕ пирĕнпе тава тивĕçлĕ вĕрентекен.

А.НИКИТИНА.